Пӗр №-рӗ 10 пус. 19-мӗш ҫул тухать.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1937
ДЕКАБӖР
8
ЙУНКУН
280 (4792)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тӗп Комитечӗ

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Мӗн пур суйлавҫӑсене, рабочисене, работницӑсене, хресченсемпе хресчен хӗрарӑмӗсене, Хӗрлӗ ҫара, совет интеллигенцине

Йулташсем!

1937 ҫулхи декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем хамӑрӑн Социалисӑмла Конституци тӑрӑх ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутатсем суйлаҫҫӗ.

Большевиксен партийӗ суйлава партире тӑман рабочисемпе, хресченсемпе, служӑшчисемпе, интеллигенципе блок туса, сойуз туса тухать. Суйлав округӗсенче Аслӑ Совета депутата суйлама регистрациленӗ кандидатсене, — коммуниссене те, партире тӑманнисене те,— заводсенче — рабочисемпе служӑшчисен пӗрлехи пухувӗсем, ҫар чаҫӗсенче — красноармейцӑсен пухувӗсем, йалсенче— колхозниксемпе йединоличниксен пухувӗсем коммуниссемпе партире тӑманнисен суйлаври сойузӗ тӑрӑх тӑратнӑ. Ҫав кандидатурӑсене ӗҫҫыннисен суйлав округӗсемпе участкӑсенче пулса иртнӗ пит нумай митингсем пӗркӑмӑллӑн йышӑннӑ.

Большевиксен партийӗ партире тӑманнисенчен уйӑрӑлса тӑмасть, йалтах урӑхла, вӑл суйлава партире тӑманнисемпе блок туса, сойус туса тухать, рабочисемпе служӑшчисен профессилӗ сойузӗсемпе, комсомолпа, партире тӑманнисен ытти организацисемпе тата обшчествисемпе блок туса тухать.

Ҫапла ӗнтӗ, депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсем коммуниссемшӗн те, партире тӑманнисемшӗн те пӗрех пулаҫҫӗ, партире тӑман кашни депутат, ҫавӑн пекех тата, коммуниссен депутачӗ пулать, тепӗр тӗрлӗ те—кашни коммунисла депутат—партире тӑманнисен депутачӗ пулать.

Большевиксен партийӗ пур коммуниссемпе сочувствуйушчисене те партире тӑракан кандидатсемшӗн те, партире тӑман кандидатсемшӗн те пурте пӗр ҫын пекех кар тӑрса сасӑлама чӗнет.

Большевиксен партийӗ — партире тӑман суйлаҫӑсем те коммунис-кандидатсемшӗн партире тӑман кандидатсемшӗн сасӑланӑ пекех пӗр харӑс сасӑлӗҫ тесе шутлать.

Суйлавҫӑсен большевикла парти кандидачӗсемшӗн сасӑлама сӑлтав пур-и?

Большевиксен партийӗ ҫитес суйлавра халӑх хӑйне шанса тӑрасса шутлама тивӗҫлӗ-и?

Мӗнле пулнӑ пирӗн тӑван ҫӗршыв ӗлӗк тата вӑл совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче большевиксен партийӗ йертсе пынипе мӗнле ҫӗршыв пулса тӑчӗ?

Мӗнле пулнӑ пирӗн тӑван ҫӗршыв помешчиксемпе капиталиссем пуҫ пулса тӑнӑ чухне тата рабочисемпе хресченсен влаҫӗ чухне, большевиксен партийӗ йертсе пынӑ чухне мӗн туса хучӗ вӑл?

Совет влаҫӗ пулнӑранпа пирӗн ҫӗршывӑн сӑнсӑпачӗ тӗпренех улшӑнчӗ. Кивӗ Российа чухне ҫийа йулнӑ, вӑтам ӗмӗрлӗ, тӗттӗм, культурӑсӑр, чухӑн, ӗҫҫыннисем правасӑр, пусмӑрта тӑнӑ ҫӗршыв пулнинчен—малта пыракан, культурӑлӑ, хӑватлӑ социалисӑмлӑ державӑ пулса тӑчӗ.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам хамӑр тӑван ҫӗршыв малашне те хӑватлӑ, культурлӑ, ирӗклӗ социалисӑмлӑ державӑ пултӑр тесе тӑрӑшать, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Пирӗн ҫӗршывра хуҫалӑхӑн капиталисӑмла системине тата експлоататӑрла классене йаланлӑхах пӗтернӗ, производствӑ орудийӗсемпе хатӗрӗсем уйрӑм харпӑрлӑхра тӑнипе пӑрахӑҫа кӑларнӑ тата ҫынна ҫын експлоатацилессине пӗтернӗ. Производствӑ орудийӗсемпе хатӗрӗсене социалисӑмла харпӑрлӑх туса ҫирӗплетнӗ, вӑл пирӗн совет обшчествин хускалми никӗсӗ пулса тӑрать.

Ҫак пӗтӗм тӗнчипе историлӗ ҫӗнтерӳве пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисен експлоатаци пусмӑр майӗкӑчӗнчен йаланлӑхах ирӗклӗ пулччӑр тесе тӑрӑшать, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

ССР Сойузӗнче социалисӑм ҫӗнтерни промышленнӑҫа чечекленсе ӳсмеле турӗ. Икӗ пйатилеткӑ ҫулӗсем хушшинче чи лайӑх промышленнӑҫ туса хунӑ, ӑна кучухнехи техникӑпа пуйанлатнӑ. Пирӗн социалисӑмла фабриксемпе заводсен производстви вӑрҫӑчченхи вӑхӑтри промышленнӑҫ производствинчен сакӑр хут ытла пысӑкрах.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн индустри малашне те, капиталисӑмла ҫӗршывсенчен иртсе кайса аталанса пытӑр тесе тӑрӑшать, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Пирӗн ҫӗршыв йалхуҫалӑхӗнче вӑйсӑр техникӑлӑ тата помешчикпе кулак пусмӑрӗнче пулнӑ ҫирӗм мӗлйун ытла вакӑ тата чи вакӑ йединоличник хресчен хуҫалӑхӗсем вырӑнне—помешчиксемпе кулаксенчен хӑтӑлнӑ социалисӑмла шултра хуҫалӑхсем — 243 пин ытла колхозсем ӳссе тӗреклечӗҫ, вӗсене тракторсем, комбайнсем тата кучухнехи ытти йалхуҫалӑх машинӗсем те пит нумай панӑ. Пирӗн колхозлӑ йалхуҫалӑхӗ, совхозсемпе пӗрле, унӑн мӗн пур отраҫлисене те илсен, вӑрҫӑчченхи вӑхӑтри йалхуҫалӑхӗнчен халӗ икӗ хут нумайрах продуктӑ туса кӑларать.

Ҫак пӗтӗм тӗнчипе историлӗ ҫӗнтерӳве пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн колхозсемпе совхозсем малашне те чечекленсе пырса пирӗн ҫӗршыва йалхуҫалӑх продуктисем ытлашшипех парса тӑччӑр тесе тӑрӑшать, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

ССР Сойузӗнче социалисӑм ҫӗнтерни ӗҫҫыннисен пурнӑҫне тӗпренех лайӑхлатрӗ. Патша Российӗнче ӗҫсӗр йулнисен масси йаланах пит нумай пулнӑ, вӑл кашни капиталисӑмла государствӑрах халӗ те ҫапла. Ҫитмен пурнӑҫ, ыранхи кун шанчӑксӑр пулни, чухӑнлӑх—ҫавӑн пек пулнӑ рабочи класӑн йаланхи пурнӑҫӗ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче ӗҫсӗрлӗхе йаланлӑхах пӗтернӗ. Ӗҫлес текен совет гражданинӗ умӗнче ыранхи кун пирки иккеленес ыйту нихӑҫан та тӑмасть. Пирӗн ҫӗршыври кашни гражданинах саккун тӑрӑх ӗҫлев прави, канӑҫ прави, ватӑлсан пурӑнмалӑх пулӑшу илмели права панӑ.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем малашне те кирек йепле ӗҫсӗрлӗхрен те, ыранхи кун пирки иккеленессинчен те хӑтӑлнӑ пулччӑр тесе тӑрӑшать, кам рабочисемпе служӑшчисен пурнӑҫне малашне те лайӑхлатса пырас тет, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Помешчиксемпе капиталиссен влаҫӗ чухне хресчен мӗнле пулнӑ-ха? Вӑл чи мӗскӗн, чи правасӑр ҫын пулнӑ. Революцичченхи йалта чухӑнсем 40 мӗлйун ҫын ытла пулнӑ, вӑл ҫынсен пурнӑҫӗ—выҫлӑх та чухӑнлӑх пулнӑ. Совет стройӗ, помешчиксене пӗтернӗ, кулакла пусмӑрлӑха пӗтернӗ, помешчиксемпе кулаксен ҫӗрӗсене 150 мӗлйун гектар ытла хресченсене панӑ тата колхоз йӗркип ҫӗнтерӳне тунӑ Совет стройӗ—хресченсене чухӑн пурнӑҫпа ҫуклӑхран ӗмӗрлӗхех хӑтарса, вӗсене пуйан та культурӑлӑ пурӑнма май туса пачӗ.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн хресченсем ҫук пурнӑҫпа выҫлӑх хӑрушлӑхӗнчен йаланлӑхах хӑтӑлччӑр тесе тӑрӑшать, кам йалӑн пуйан пурнӑҫне малашне те ӳстерсе пырас тет, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Патша Российӗ тӗттӗм те вӗренмен пулнӑ. Халӑхӑн чи пысӑк пайӗ хутла пӗлмен. Совет ҫӗршывӗнче ӗнтӗ пурне те обийазательнӑ йӗркепе вӗрентессипурнӑҫа кӗнӗ—пирӗн шкулсенче 30 мӗлйун ача вӗренет. Пур граждӑнсем валли те вӗренӳ прави кӗрешсе илсе хамӑрӑн Конституци ҫине ҫырса хунӑ. Ҫӗршывра халӑх хисепӗнчен 90 проценчӗ ытла хутла пӗлет. Часах ӗнтӗ ҫӗршывра хутла пӗлменни пӗр гражданин та пулмӗ. Пирӗн ҫӗршывра ӑслӑлӑх, литературӑ, театр, искусствӑ нихҫанхинчен те вӑйлӑн ӳссе пыраҫҫӗ. Ӑслӑлӑхпа искусствӑ ҫӗнтерӗвӗсем мӗн пур граждӑнсен тивлечӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн ҫӗршывра ҫутта кӑларас ӗҫ малашне те ӳссе пытӑр тесе тӑрӑшать, кам Совет Сойузӗнчи халӑхсен ӑслӑлӑхӗ, литератури тата искусстви малашне те чечекленсе пытӑр тет, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Хӗрарӑм патша Российӗнче чура пулнӑ, вӑл капиталисӑмла ҫӗршывсенче пуринче те ҫаплах халӗ те чура пулса тӑрать. ССР Сойузӗнче анчах вӑл ирӗклӗ те тулли правалӑ. Хулара та, йалта та хӗрарӑм социалисӑм строителствипе государствӑ управленинче арҫынпа алла алӑн тытӑнса ӗҫлет. Пирӗн ҫӗршывра анчах хӗрарӑм валли тулли пурнӑҫлӑ, телейлӗ ача амӑшӗ пулма условисем туса панӑ. Совет саккунӗсем ача амӑшӗн прависемпе ачасен сывлӑхне сыхласа тӑраҫҫӗ.

Ҫак ҫитӗнӳсене пирӗн халӑх большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам пирӗн совет хӗрарӑмӗ хуҫалӑхпа управленин мӗн пур ӗҫӗсенче малашне те ирӗклӗ тата тулли правалӑ пултӑр тесе тӑрӑшать, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Патша Российӗ халӑхсен тӗрми пулнӑ, нацилӗ пусмӑрлӑх ҫӗршывӗ, нацисем пӗр-пӗрине ҫапӑҫса-чикӗшсе пурӑннӑ ҫӗршыв пулнӑ, ҫавӑн пекех мӗн пур капиталисӑмла ҫӗршывсем те нацилӗ пусмӑрпа колонилӗ чуралӑх ҫӗршывӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Совет Сойузӗнче анчах ӗлӗк пусмӑрта пулнӑ халӑхсем нацилӗ пусмӑрлӑхран тата права пӗртанмарлӑхӗнчен пӗтӗмпех хӑтӑлчӗҫ. Халӗ ССР Сойузӗнчи халӑхсем пӗртанлӑх тата ирӗклӗх никӗсӗ ҫинче пӗрлӗхлӗ сойузлӑ государствӑна пӗрлешнӗ. Совет Сойузӗ—халӑхсем пӗрпӗрне шанманнине пӗтӗмпех пӗтернӗ, халӑхсем пӗрпӗрне шанса, тӑванла сойузлӑ пулса хутшӑнса тӑракан тата туслӑн пӗр пулса ӗҫлесе пурӑнакан тӗнчери пӗртенпӗр ҫӗршыв пулса тӑрать.

Ҫак пӗтӗм тӗнчипе историлӗ ҫӗнтерӳве пирӗн тӑван ҫӗршыв большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗ.

Кам Совет Сойузӗнчи халӑхсем малашне те ирӗклӗ те пӗртан правалӑ пулччӑр тесе тӑрӑшать, кам ССР Сойузӗнчи халӑхсен туслӑхне малала ҫирӗплетес тет, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Пирӗн тӑван ҫӗршыв ирӗклӗ ҫӗнӗ пурнӑҫ строителстви тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем чӑннипех те аслӑ. Ҫав ҫитӗнӳсене ССР Сойузӗнчи халӑхсем большевиксен партийӗ йертсе пынипе шалти тата тулти тӑшмансене хирӗҫ кӗрешсе тунӑ. ССР Сойузӗнчи халӑхсен тусӗсем ҫав ҫитӗнӳсемшӗн савӑнаҫҫӗ те вӗсене саламлаҫҫӗ. Анчах Совет Сойузӗн тусесем ҫеҫ мар пур. Унӑн тата тӑшмансем те пур. Вӗсем, пӗрремӗшӗнчен, ҫӗршыври пӗтернӗ експлоататорла классен йулашкийӗсем. Вӗсем, иккӗмӗшӗнчен, Совет Сойузӗн чиккисен лешйенчи капиталисӑмла ҫӗршывсенчи реакцилӗ-фашисла вӑйсем. Шалти тӑшмансем сахал йышлӑ та вӑйсӑр пулсан, вӗсене пулӑшакан тулти тӑшмансем вара пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никамапӑхӑнманлӑхӗшӗн чылайах пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав хӑрушлӑх пирӗн ҫӗршывшӑн хӑрушӑ ан пултӑр тесен, пӗрремӗшӗнчен, шпионсене, сӑтӑрҫӑсене, диверсантсене, совет халӑхӗн тата ытти тӑшманӗсене те тытса пӗтерме пултаракан лайӑх организациленӗ каратељнӑй оргӑнсем кирлӗ. Иккӗмӗшӗнчен, лайӑх организациленӗ техникӑпа вӑйлӑ хӗҫпӑшалантарнӑ, совет чиккисене тул йенчен тапӑнасран сыхласа тӑма пултаракан Хӗрлӗ ҫар кирлӗ; тата, йулашкинчен, тӗплӗн шухӑшласа тунӑ, вӗҫне ҫити пурнӑҫа кӗртсе пыракан, капиталисӑмла ҫӗршывсенчи вӑрҫӑшӑн ҫунакан ушкӑнсен йут ҫӗршывсене туртса илес политикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пыма пултаракан мирлӗ политикӑ кирлӗ. Совет влаҫӗ чылай ҫулсем хушшинче ҫаксене тума пултарчӗ: хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн хал ӗнтӗ тӗрӗсленнӗ каратељнӑй оргӑнсем те, лайӑх хӗҫпӑшалланнӑ Хӗрлӗ ҫар та, ҫавӑн пекех тата йутҫӗршывсемпе ҫыхӑну тытас ӗҫре ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе пыракан мирлӗ политикӑ та пур. Ҫак ҫитӗнӳсем пуррипе кӑна совет халӑхӗ акӑ ӗнтӗ вунпулт ҫул хушши вӑрҫӑлӑ ҫапӑҫусенчен хӑтӑлса пурӑнать, мирлӗ пурнӑҫӑн ырлӑхӗсемпе усӑ курать, хӑйӗн мирлӗ ӗҫне малала туса пыма пултарать.

Хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никамапӑхӑнманлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ҫав ҫитӗнӳсене ССР Сойузӗнчи халӑхсем большевиксен партийӗ йертсе пынипе турӗҫ.

Кам ССР Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем малашне те мирлӗ ӗҫӗн ырлӑхӗсемпе усӑ курччӑр тесе тӑрӑшать, кам хамӑрӑн тӑван ҫӗршыв ирӗклӗ те никама пӑхӑнмасӑр пурӑнтӑр тет, вӑл большевиксен партийӗшӗн сасӑлать, вӑл коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ пирӗн тӑван ҫӗршыв революци ҫулӗсенче большевиксен партийӗ йертсе пынипе ҫӗнтерсе илнӗ ҫитӗнӳсем.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ большевиксен партийӗн ӗҫӗсемпе кӗрешӳ итогӗсем, унӑн сӑмахӗсем нихӑҫан та ӗҫӗсенчен уйӑрӑлман, вӑл панӑ сӑмахсем нихҫан та пуш сӑмах пулман.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ большевиксен партийӗ ҫитес суйлавсенче халӑх хӑйне шанӗ тесе шутлама пултарать.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ большевиксен партийӗ суйлавҫӑсем пурте коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн пӗр кӑмӑллӑ пулса сасӑлӗҫ тесе шанма тивӗҫлӗ.

СУЙЛАВҪӐ ЙУЛТАШСЕМ!

Суйлав кампани пынӑ вӑхӑтра хӑшпӗр коммуниссемпе партире тӑманнисем лидӗрсемшӗн анчах, партипе правителствӑ руководителӗсемшӗн, вӗсем хӑш округра регистрациленнине пӑхмасӑрах обйазателнӑ вӗсемшӗн анчах сасӑлама туртӑнни палӑрчӗ. Ҫак йулташсем саккун тӑрӑх кашни кандидат пӗр суйлав округӗнче ҫеҫ баллотировкӑра тӑма пултарнине ӑнланмаҫҫӗ пулмала. Ҫав йулташсем, большевиксен партийӗпе партире тӑманнисем ырланӑ пӗрпӗр кандидатшӑн сасӑлани—вӑл пӗр ҫав кандидатшӑн ҫеҫ сасӑлани пулмасть, вӑл чи малтан — большевиксен партийӗ партире тӑман ҫынсемпе пӗрле тытса пыракан политикӑшӑн, ку йе тепӗр кандидат пурнӑҫа кӗртсе пыма сӑмах панӑ политикӑшӑн сасӑлани пулнине ӑнланмаҫҫӗ пулмала. Задачӑ ҫапла: кандидатсем ҫирӗп, халӑх ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйне паракан ҫынсем пулччӗр; суйлавҫӑсем, хӑшпӗр кандидатсем хӑйсем ҫамрӑккине пула хальхи вӑхӑтра пурне те паллӑ руководителсем пулса тӑрайман пулсан та, пур кандидатсемшӗн те пӗр ҫын пек кар тӑрса сасӑлаччӗр. Совет стройӗн уйрӑмлӑхӗ ҫакӑнта пулать те: вӑл ҫынсене, вӗсен пултарулӑхне, таланчӗсене хӑвӑрт ӳсме май парать, ӗнер кӑна паллах мар пулнӑ ҫынсем кӗске вӑхӑтрах пурне те паллӑ пурте йуратакан дейателсем пулма пултараҫҫӗ.

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийӗн Тӗп Комитечӗ мӗн пур коммуниссемпе сочувствуйушчисене партире тӑман кандидатсемшӗн партире тӑракан кандидатсемшӗн сасӑланӑ пекех пӗр шухӑшлӑ пулса сасӑлама чӗнет.

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийӗн Тӗп Комитечӗ партире тӑман мӗн пур суйлавҫӑсене коммунис-кандидатсемшӗн вӗсем хӑйсем партире тӑман кандидатсемшӗн сасӑланӑ пекех пӗршухӑшлӑ пулса сасӑлама чӗнет.

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийӗн Тӗп Комитечӗ мӗн пур суйлавҫӑсене 1937 ҫулти декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Сойуз Советне тата Националнӑҫсен Советне депутатсем суйлама пурте пӗр ҫын пек пулса суйлав урнисем патне тухма чӗнет.

Совет государствин аслӑ оргӑнне суйламали хисеплӗ правапа усӑ курман суйлавҫӑ пӗре те пулмала мар.

Суйлавҫӑсене пурне те Аслӑ Совет суйлавне хутшӑнтарасси хӑйӗн граждӑнла тивӗҫӗ мар тесе шутлакан пӗр активлӑ гражданин та пулмала мар.

1937 ҫулти декабӗрӗн 12-мӗшӗ — ССР Сойузӗнчи мӗн пур ӗҫҫыннисен Ленинӑн—Сталинӑн ҫӗнтерӳлӗ йалавӗ тавра пӗрлешмелли аслӑ уйав кунӗ пулса тӑмала.

ПУРТЕ СУЙЛАВА!

СЫВӐ ПУЛТӐР ТА ТЕРЕКЛЕНТӖР ПИРӖН ХӐВАТЛӐ ТӐВАН ҪӖРШЫВ — СОВЕТЛӐ СОЦИАЛИСӐМЛӐ РЕСПУБЛИКӐСЕН СОЙУЗӖ!

СЫВӐ ПУЛТӐР ПИРӖН СОВЕТЛӐ СОЦИАЛИСӐМЛӐ КОНСТИТУЦИ!

СЫВӐ ПУЛТӐР РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН СОЙУЗӖ!

СОВЕТ ГОСУДАРСТВИН АСЛӐ ОРГАННЕ СУЙЛАМАЛИ ПУЛАС СУЙЛАВРИ КОММУНИССЕМПЕ ПАРТИРЕ ТӐМАННИСЕН СОЙУЗӖ СЫВӐ ПУЛТӐР!

СЫВӐ ПУЛТӐР СОВЕТ ВЛАҪӖ!

СЫВӐ ПУЛТӐР ПӖТӖМ СОЙУЗРИ КОММУНИССЕН (большевиксен) ПАРТИЙӖ!

ПӖТӖМ СОЙУЗРИ КОММУНИССЕН (большевиксен) ПАРТИЙӖН ТӖП КОМИТЕЧӖ.

1937 ҫулти декабӗрӗн 6-мӗшӗ.

ПИРӖН КАНДИДАТСЕМ

Спасов Лука Семенович—Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ. Сойуз Советне депутата суйлама Улатӑрти № 366 Суйлав Округӗнче регистрациленӗ.

Цыганова Йевдокийа Петровна—Куславкка комбинатӗнчи стахановкӑ. Сойуз Советне депутата суйлама Канашри №-365 Суйлав Округӗнче регистрациленӗ.

Андрейева Зойа Ананйевна—Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателӗ. Сойуз Советне депутата суйлама Шупашкарти № 364 Суйлав Округӗнче регистрациленӗ.

Краснов Андрей Михайлович—орденоносец, Йетӗрне районӗнчи „Крестьянская газета" колхоз председателӗ. Сойуз Советне депутата суйлама Ҫӗмӗрлери №-367 Суйлав Округӗнче регистрациленӗ.

Сталинла Конституцийе йышӑннӑ кун—пӗтӗм халӑх праҫникӗ

Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем ССР Сойузӗн Сталинла Конституцине йышӑннӑранпа пӗр ҫулталӑк тултарнине хаваслӑ уйавларӗҫ.

Ҫак кун Хӗрлӗ столицӑн илемлетнӗ плошчӗдсемпе урамӗсенче халӑх тулли йех пулнӑ. Хулари пур районсенче те массӑлӑ митингсем пысӑк ҫӗкленӳпе иртнӗ. Ҫав митингсенче ӗҫҫыннисем 1.800 пин ҫын пулнӑ.

Митингсенче тухса каланисем пурте Сталинла Конституцин аслӑлӑхӗ ҫинчен, ӑна тунӑ генилӗ ҫын ҫинчен—пур ӗҫҫыннисен ҫулпуҫӗ тата учителӗ Иосиф Виссарионович Сталин ҫинчен каланӑ. Вӗсем декабӗрӗн 12-мӗшӗнче, ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали кун, сасӑсене советлӑ тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫыннисемшӗн, партири тата партире тӑман большевиксемшӗн, Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ ӗҫӗшӗн вӗҫне ҫитиччен тӑракан ҫынсемшӗн паратпӑр, терӗ. Тухса каланисем пурте троцкисла-бухаринла-фашисла бандитсене, халӑхӑн тата ытти тӑшманӗсене те тарӑхса ылханнӑ.

Ленинградра декабӗрӗн 5-мӗшӗнче пулса иртнӗ митингсенче ӗҫҫыннисем ҫӗршер пин ҫын пулнӑ.

Советлӑ Украинӑ столицинче—Кийевра—праҫник умӗн, декабӗрӗн 4-мӗшӗнче ӗҫҫыннисен 200 пин ҫынлӑ демонстрацийӗ пулнӑ, декабӗрӗн 5-мӗшӗнче—нумай халӑхлӑ митингсем пулса иртнӗ.

Тбилиси хулинче пӗтӗм халӑх праҫникӗ кунӗнче демонстраци пулса иртнӗ. Демонстацире 300 пин ҫын пулнӑ.

Совет ҫӗршывӗнчи миллионшар ӗҫҫыннисем декабӗрӗн 5-мӗшӗнче коммуниссен партине пӗтӗм чӗререн парӑнни, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне, ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали пӗррӗмӗш кандидата—Сталин йулташа вӗҫӗмсӗр йуратнине ҫӑтартрӗҫ. (ТАСС).

ПИРĔН КАНДИДАТСЕМ

Чкалов Валерий Павлович — Совет Сойуз Геройĕ. РСФС Республикĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама Горькири № 15 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Иванов Герасим Иванович — ПСК(б)П Обком секретарĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Вăрмарти №499 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Горкин Александр Федорович —ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Канашри № 500 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Коротков Сергей Ксенофонтович—орденоносец, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреçри №501 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Моисейева Тамара Алексейевна—Улатăрти паровозсем йусакан заводри механически цехĕн бригадирĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Улатăрти №503 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Краснов Петр Дмитрийевич—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Çĕрпӳри № 498 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

В. П. Чкалов, И. В. Новиков тата А. М. Краснов йулташсемшĕн сасăлатпăр

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр). Колхозсенче, предприйатисенче, суйлав участкисенче, пур çĕрте те суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртеççĕ. Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче хулари 3-мĕш суйлав участкинчи килхуçи арăмĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 300 хĕрарăм ытла пулчĕ. Хĕрарăм-суйлавçăсем, хĕрарăмăн ĕлĕкхипе халъхи пурнăçĕ çинчен Коçтинă йулташ докладне пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Ун хыççăн хăйсен шухăшĕсемпе ĕçĕсем çинчен туха-туха каласа пачĕç. Акă Далъскайа йул. хăй ĕлĕк 13 çултах хуçа патне ĕçлеме кайни çинчен, патша самани хĕрарăмсенчен мăшкăласа пурăнни çинчен каласа пачĕ.

— Ĕлĕк хĕрарăмран, „чăх—кайăк мар, хĕрарăм—çын мар", тесе кулнă. Ниçта та ăна хисеплемен. Çавăнпа вĕсем ачасене те лайăх пăхса ӳстереймен, хĕненĕ, мăшкăланă,—терĕ Далъскайа.—Халĕ акă епĕр телейлĕ çĕршывра пурнатпăр. Епĕ ĕлĕк ним пĕлмен, тĕттĕм хĕрарăм пулнă пулсан, халĕ—артискă. Телейлĕ пурнăç туса паракан çулпуça, Сталин аттене хĕрӳлĕ салам!—тесе пĕтерет Далъскайа хăй сăмахне.

50 çулхи килхуçи арăмĕ Левинсон йулташ патша вăхăтĕнчипе совет влаçĕнчи йеврей халăхĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ.—Халĕ йеврей халăхĕ мĕн пур халăхсемпе пĕр тан правалă, вĕсем вĕренеççĕ, ĕçлеççĕ,—терĕ Левинсон йул. Хама илсе кăтартам. Кам пулнă пулăттăм-ши епĕ ĕлĕк пулсан? Пирĕн çемйере 14 çын пулнă. Анчах йăвăр пурнăçпа 10-шĕ вилсе пĕтнĕ. 12—14 шар сехет ĕçленĕ ĕлĕк епĕр, çапах çимелĕх илеймен. Халĕ мĕнле пурнатпăр? Шăлăм манăн паллă изобретателъ, ывăлăм—инженерта ĕçлет. Ну, йепле савăнас марха халĕ ман?! Вĕт пурнăç çав тери савăнăçлă. Çакна пире пурне те совет влаçĕпе коммуниссен партийĕ туса пачĕç. Çавăнпа та епĕ хамăн сасăма Аслă Совета суйлама телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн кĕрешекенсемшĕн, коммунисăм обществи тăвассишĕн кĕрешекен паттăр болъшевиксемшĕн—Чкалов, Краснов, Новиков йулташсемшĕн паратăп.

54 çулхи Батйайева йулташ хăйĕн сăмахĕнче телейлĕ пурнăçпа пурăнни çинчен каларĕ.

Тухса калаçакансем пурте, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ Чкалов, Краснов, Новиков йулташсемшĕн сасăлама хатĕррине палăртрĕç.

Йулашкинчен килхуçи арăмĕнчен ачасен йаçлине ĕçлеме куçарнă Иванова йулташ сăмах тухса каларĕ

—Епĕ 15 çулта чухне хамăрăн килте çимели çукран пуйан патне ĕçлеме кайнă. Ĕçлеме питех те йăвăрччĕ. Кунĕн-çĕрĕн сывăрмасăр ĕçлесен те хуçана йурăман,—терĕ Иванова йулташ.—Ĕлĕк епĕ вĕренеймен. Епĕ халĕ çырма та, вулама та лайăхах пĕлетĕп. Мана шанса ачасен йаçлин заведуйушчине лартрĕç. 75 ачана пăхатăп епĕ. Хĕрарăмсем, епĕр халĕ арçынсемпе танах, пирĕншĕн вĕренме те, ĕçлеме те, канма та çул уçă.

—Пирĕн, хĕрарăмсен, сисĕмлĕ пулмала, тăшмана паллама пĕлмеле. Пупсем тĕрлĕрен киревсĕр агитаци сараççĕ. Çавсене çапса салатмала, хамăр хушша кĕме вырăн памала мар.

—Пирĕн Аслă Совета чи лайăх, ĕçхалăхĕн пурнăçне татах та лайăхлатассишĕн мĕн пур вăйа хурса ĕçлекенсене суйламала. Епĕр çавăн пек паттăр болъшевиксене—Чкалова, Краснова, Новикова Аслă Совета суйлама кандидата палăртнă. Çавсемшĕн хамăр сасăмăрсене паратпăр!—терĕ Иванова йулташ

Залăра пĕр вăхăт алă çупнă сасă йантраса кайаť, оркестр „Интернационал" выляť.

Пуху пĕр саслăн, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлав йешчĕкĕсем патне пырса, Аслă Совет депутачĕ пулма Чкалов, Краснов, Новиков йулташсемшĕн хăйсен сассисене пама пулса резолюци йышăнчĕ.

Хар. Лисин.

Вата çынсен савăнăçĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Çĕнĕ Ахпӳртри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем ССР Сойузĕн Конституцине йышăннă куна пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Ĕлĕк нимĕнле правапа та уçă курман Колпаков Алексей акă мĕн калаť:

— Сталинла Конституци тăрăх ĕççыннине кирлĕ правасене пурне те илтĕмĕр. Ĕçле, вĕрен, кан!

Манăн çемйере 6 çын. Кăçал епĕр 1200 ĕçкунĕ турăмăр. Ĕçкунĕ пуçне 14 шар килограм тĕштырă тивет. Епĕр çемйепе 1054 пăт ытла тырă илетпĕр. Çакăн чухлĕ тырă епĕ ĕмĕрте те курман. Ĕлĕк епĕр шкул çинчен шутлайман та. А халĕ манăн ачасем—аслă ывăл Иван—йалти тулли мар вăтам шкулта вĕренсе тухрĕ. 14 çулхи Олъга каллех вăтам шкулта вĕренет. Халĕ пирĕн пурнăç тутă. Вĕренме çул уçă, тет вăл.

81 çулхи Шăртанов Николай хăй ватлăхра илнĕ правасемпе хаваслanаť.

— Хам ĕмĕрте нумай асап куртăм. Тăвата ывăлăма патша вăрçинче çухатрăм. Халĕ епĕ колхозра ĕçлемесĕрех пурăнма пултаратăп. Колхоз мана кашни кунах пулăшаť. Çапах та епĕ кăçал 100 ĕçкунĕ турăм. Пурнăç савăнăçлă. Ĕçлемесĕр нийепле те чăтаймастăп. Умри лайăх пурнăçа курас килет. Çитес вырсарни кун Аслă Совета суйлама кайатăп. Ватă пулсан та суйлав прави пачĕç мана. Савăнатăп уншăн епĕ,—хаваслanса калаçаť Шăртанов йулташ.

65 çулхи Океанов Федорăн çамрăклăхĕ тарçăрах çӳресе иртнĕ. Унăн мĕн пур прави те пуйансем патĕнче асап тӳсесси çеç пулнă. Çиме çăкăр çитмен, çине лайăх тумтир тăхăнайман. Сакăр çул ĕнтĕ колхозра ĕçлет, пурнăç пачах урăхланчĕ. Çĕнĕ вӳрт лартрĕ. Ĕне тата ытти вак выльăхсем туйанчĕ. Кăçал 700 пăт тĕштырă илет. Хамăрăн мирлĕ ĕçе унăн ывăлĕ хытă сыхлаť. Вăл 9 çул ĕнтĕ Хĕрлĕ çарта лейтенант пулса ĕçлет.

Çавăн пек хăйсен пурнăçне тĕпренех улăштарнă колхозниксем Сталин йачĕпе тăракан колхозра сахал мар. Вĕсем çакăншăн тĕнчери чи демократилĕ Конституцине туса паракан Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ.

Н. Пушкин
Ф. Майков

Суйлав саккунне вĕренес ĕç хĕрӳлĕн пыраť

Мăн Етмен (Хĕрлĕ Чутай р.) йалсоветĕнче суйлав саккунне лайăх вĕренеççĕ. Суйлав саккуне вĕренме пурĕ 6 кружок организациленĕ. Тата кашни 10 кил пуçне пĕр агитатор ĕçлет. Суйлав саккунне ăнлантарса парассипе комсомолецсем, йалти активиссем ĕçлеççĕ. Занятисене вăтăр çынтан кайа мар çӳреççĕ. Суйлавçăсен кашнин тенĕ пекех литературă çителĕклĕ. Кружоксенче вĕреннĕ чухне вырăнти материалпа çителĕклĕ усă кураççĕ.

Суйлав саккунне вĕренессине организациленипе пĕрлех хут пĕлменнисене вĕрентес ĕçе те чĕртсе йанă. 32 çынна вĕренĕве хутшăнтарнă.

Й. Сигайев.

Хавасланса хутшăнатăп

Епĕ Октябĕр революци хыççăн çуралса ӳснĕ колхоз çамрăкĕ. Ĕлĕкхи нушалă асаплă пурнăçа курман. Кăçалхи çул—ман ĕмĕрти паллăран та паллă çул. Епĕ кăçал пуçласа ССР Сойузĕн Аслă Советне тĕнчери чи демократилĕ саккун тăрăх суйлатăп. Епĕ 1919 çулта çуралнă.

Ытла та савăнăçлă халь вĕренме, ĕçлеме, канма правасем пур. Епĕр çамрăклах государства ĕçне хутшăнатпăр. Мĕншĕн савăнас мар çак Сталин саманинче! Епĕ халĕ Арапуçĕнчи районри колхоз шкулĕнче вĕренетĕп. Епĕ „хорошо" паллăсемпе вĕренетĕп. Ку манфăн çителĕксĕр, Епĕ „отлично" паллăсемпе вĕренсе тухса тăван çĕршывăн паттăр ĕçлекен çынĕ пулма тăрăшатăп.

Халĕ епĕ Сталинла Конституци тăрăх пуçласа суйлава хутшăнатăп. Çакăншăн епĕ тем пекех хĕпĕртетĕп. Халь епĕ Сталинла Конституципе суйлав Положенине татах тепĕр хут тĕплĕн вĕрентĕм. Хам пĕлнипе çеç чарăнса тăмастăп, вĕсем çинчен пĕлмен суйлавçăсене каласа ăнлантаратăп. Историлĕ кун—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлав урни умне пырса, епĕ хамăн сасса социалисăмлă çĕршывăн лайăхран та лайăх çыннисемшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн çирĕп кĕрешекенсемшĕн паратăп.

В. Григорйев.

А. И. Стецкий йулташ столицăри совет интеллигенцийĕ патĕнче

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче каçхине Ленин орденлă Чăваш республикĕн столицинчи Совет интеллигенцийĕ Шупашкарти калаçакан кино-театăра суйлав умĕнхи пухува пухăнчĕ. Кунта профессорсем, доцентсем, аспирантсем, искусствăпа медицинă работникĕсем, аслă шкулсенчи, техникумсенчи, рабфаксенчи, вăтам тата туллимар вăтам шкулсенчи преподавателсем, писателсем—пĕтĕмпе 800 çын ытла пуçтарăннă.

Вăхăт çиччĕмĕш сехет çине куçрĕ. Президиума ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Алексей Иванович Стецкий йулташ тухрĕ. 800 çын пĕрлĕхлĕ пулса ура çине тăраť. Тăваллăн алă çупаççĕ, аслă Сталин йулташăн чи шанчăклă, чи сывăх помошниксенчен пĕрне—Алексей Иванович Стецкий йулташа саламлаççĕ. „Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин! „урра!" „Сывă пултăр пирĕн кандидат Алексей Иванович Стецкий!" „урра!" Оркестр Интернационал йурлаť.

Зал лăпланчĕ. Пуху ĕçлĕ президиум тата тăваллăн алă çупса Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Ейхе, Димитров, Тельман, Хозе Диас, Ван-мин йулташсене хисеплĕ президиума суйларĕ. Чи малтанах ПСК(б) Парти Обком секретарĕ Павлов йулташ Сталинла Конституцине йышăннăранпа пĕр çул тултарни çинчен доклад туса пачĕ.

Павлов йулташ хыççăн учителницă Чупракова, профессор Берзин, врач Кузнецов, истори преподавателĕ Маркова, т. ыт. йулташсем те тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте наукăпа искусствă çĕнтерĕвĕсем çинчен, хăйсен пултарулăхне ӳстерсе пыма, вĕренме, ĕçлеме, канма лайăх условисем туса пани çинчен, наукăпа искусствăна татах та аталантарас тĕлĕшпе партипе правителствă пĕтĕм майсемпе тăрăшса пулăшни çинчен хавхаланулăн калаççĕ. Наукăпа искусствăн чи пысăк мăçтăрне—аслă Сталин йулташа чĕрери йуратупа саламлаççĕ, вăл наукăпа искусствă çыннисене тăван атте пек пăхнăшĕн тав тăваççĕ.

— Сăмах ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидата Алексей Иванович Стецкий йулташа паратăп,—тесе пĕлтерчĕ пуху председателĕ.

Залри пĕтĕм халăх ура çине тăрса тăваллăн алă çупаť. Залăн пур йенчен те саламлă сăмахсем: „Сывă пултăр аслă Сталин!" „Стецкий йулташа салам!", „урра!". Оркестр „Интернационал" йурлаť. Оркестр выляма чарăнсан алă çупни, „урра" кăшкăрни каллех тăваллăн çĕкленет.

Алексей Иванович Стецкий йулташ чăвашла—Манăн хаклă суйлавçăсем!—тенине илтсенех каллех залра тăваллăн алă çупни, саламлани, „урра" кăшкăрни А. И. Стецкий йулташа хăйĕн сăмахне малала тăсма памаççĕ.

А. И. Стецкий йулташ пысăк сăмах каларĕ. Пĕтĕм залри халăх унăн çулăмлă сăмахĕсене пысăк тимлĕхпе итлерĕ, темиçе хутчен тăваллăн алă çупрĕ.

Пуху ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсемшĕн—А. И. Стецкий, В. П. Чкалов тата З. А. Андрейева йулташсемшĕн сасăлама чĕнсе резолюци йышăннипе хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ.

Чкалов йулташшăн сасăлатăп

Епĕ кăçалхи çул 18 çул тултарса, пирвайхи хут Сталинла Конституци тăрăх Аслă Совета суйлама хутшăнатăп. Халĕ епĕ телейлĕ çĕршывра колхозра ĕçлесе 215 ĕçкунĕ турăм.

Сталинла Конституци тăрăх епĕ вĕренме, ĕçлеме, канма пултаратăп. Кун пек правасемпе капиталисăмла государствăсенчи ĕççыннисем усă кураймаççĕ.

Телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн тăван аттемĕре, çутă хĕвелĕмĕре, йуратнă çулпуçăмăра Сталин йулташа чĕререн тав тăватăп.

ССР Сойузĕн Националнăçсен Советне суйланă чухне хамăн сасса Чкалов йулташа паратăп. Епĕ чи лайăх сталинцăсемшĕн сасăлатăп.

А. Семенов.

Пурăннă çемĕн пурăнас килет

ВĂРНАР. Йермошкăри суйлав участкинче ватă карчăксемпе стариксен пухувĕ пулса иртрĕ. Вĕсене пухува пыма колхозсем чи лайăх лашасемпе çунасем панă Ватă карчăксемпе стариксем хăйсене панă лашасене хĕрлĕ хăмачсемпе илемлетнĕ, шăнкăравсем çакнă Хăйсем праçник тумĕпе тумланнă

Чи малтанах суйлав çуртне Галкина Аннăпа Соколова Варвара çитрĕç. Пӳрте кĕрсенех:

— Кун пек лайăх лашапа хитре çуна çине ларса хам йуратнă ачана качча тухнă чух та чупманчĕ, халĕ чупрăм, питĕ савăнтăм,—терĕ Галкина Анна йулташ, вĕсене кĕтсе илекенсене.

Вунпĕр сехет тĕлне 70 карчăксемпе стариксем пухăнчĕç. Малтан вĕсем суйлавçăсен спискисене тĕрĕслерĕç, кайран суйлав комиççи председателĕн Краснов йулташăн Аслă Совета суйласси çинчен тунă докладне итлерĕç. Чи малтанах Феоктистова йулташ тухса каларĕ

— Пурнăç чăннипех лайăхланчĕ, тăвансем. Ватă ĕнтĕ епĕ. 75 çулта. Патша саманинче 55 çул пурăннă Вăл çулсене аса илсенех пĕтĕм ӳт-пĕвĕм чĕтресе кайаť. Çĕр! Çынăн амăшĕ вĕт вăл. Мĕн чухлĕ макăрнă, мĕн чухлĕ куççул йухтарнă уншăн! Халь çĕр пĕтĕмпех пирĕн, вăл çĕр çинче нумай тырпул туса илетпĕр. Пурнăç пуйанлавчĕ. Пурăнас килет. Сталин йулташа пачĕ çак пурнăçа. Сталин йулташпа пĕрле пирĕн телейшĕн пĕтĕм вăйпа ĕçлекен болъшевиксемшĕн—Чкалов, Пумп р тата Краснов йулташсемшĕн сасăлатăп,—тет вăл.

Пуху Сталин йулташ патне саламлă çыру йачĕ.

М. Иванов.

Суйлав кунне хавасланса кĕтсе илетпĕр

Мăн Чăвак суйлав участкине (Тутаркас р.) 900 суйлавçă кĕрет. Участкăри çынсем 18 кружокри „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренеççĕ. Йалсенче, колхозсенче стариксен, хĕрарăмсен, çамрăксен пухувĕсем туса иртерни. Кружоксем 5 шер занятисем ирттерсе, 900 суйлавçă вĕрентсе кăларнă. Йункăри кĕçĕн вăтам шкулĕнче вĕренекенсем художествăлă вăйăсемпе физкултурă вăййисем выляса кăтартаççĕ. Шкулпа вулав çурчĕ „Анисса" пйесă лартма хатĕрленет.

Мăн Чăвак суйлав комиççи суйлав ирттермели çуртра мĕнле хатĕрсем кирлĕ, çавсене пурне те хатĕрленĕ. Патефон, хуткупăс, шашкă-шахмăт, биллиард вăййисем пулаççĕ. Унта буфет та пулаť.

С. Салдакейев.

Суйлав участкисенче

Тракри суйлав участкинче суйлав саккунĕпе Аслă Совета суйлама палăртнă кандидатсен пурнăçĕпе паллашас ĕç хĕрӳлĕ пыраť.

Суйлав кунне колхозниксем питĕ хавасланса кĕтсе илеççĕ. Суйлав кунĕнче кашни кил çине хĕрлĕ йалавсем кăларса çакма хатĕрленеççĕ.



Националънăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат, ПСК(б)П Тĕнкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ Алексей Иванович Стецкий йулташ Шупашкарти суйлавçăсен пухăвĕнче сăмах калаť.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

ПИРĔН КАНДИДАТСЕМ

Пумпур Петр Иванович—Мускав Çар Округĕн Çар Сывлăш вăйĕсен начальникĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Вăрнарти №504 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Стецкий Алексей Иванович—ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн пуçлăхĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар хулинчи № 496 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Харитонова Ольга Тихоновна—Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти вăтам шкулти учительницă. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Патăрйелти №502 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Розанов Алексей Михайлович—Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Йетĕрнери №506 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Новиков Иван Васильевич—ПСК(б)П Çĕмĕрле райком секретарĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери №505 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Сахьянова Мария Михайловна—ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контроль Комиççин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал № 497 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Лайăх ĕçлекен агитатор

Вăрмар суйлав участкине (Çĕрпӳ районĕ) пилĕк йал кĕрет, вĕсенче 760 суйлавçă. Çак суйлавçăсем хушшинче 18 агитатор тата 5 доверенный ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте Сталинла Конституцине тата суйлав Положенине вĕренмелли кружоксенче ĕçлеççĕ.

Участкări агитаторсенчен уйрăмăнах Дернов, Петров, Димитриев, Тимофеев тата Овчинникова йулташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене çирĕп план тăрăх туса пыраççĕ. Кружока вĕренме пырайман суйлавçăсем патне килĕсене кайса вĕрентеççĕ.

„Ударник" колхозри агитатор Тимофеев йулташăн кружокĕнче 57 суйлавçă вĕренет. Тимофеев йулташ учитель пулса 1921 çултанпа ĕçлет. 1930 çулта вăл вăçĕ колхоз организациленĕ. Халăх хушшинче вăл авторитетлă. Занятисене вăл лайăх хатĕрленсе, кĕнекесем, схемăсем тата ытти пособисем те илсе кайать. Хăй мĕн ĕçленине, мĕнле интереслă вăхăт пулнине тата суйлавçăсем мĕн калаçнине йатарласах туна дневник çине çырса пырать. Сталинла Конституцине тата суйлав Положенине вĕрентессине вăл пилĕк темăна пайланă. Çак темă тăрăх тухакан „ыйтусемпе занятисем валли план тăвать. Нойаберĕн 30-мĕшĕ тĕлне Конституципе суйлав Положени çинчен суйлавçăсене пурне те ăнлантарса панă. Халĕ вăл кружоксене çӳреймен суйлавçăсене хăйсене уйрăмăн вĕрентет. Суйлав техникине, кандидатсен биографийĕсене, халиччен вĕреннине мĕнле ăнланнине пĕр-пĕрин хушшинче ыйтусем парса тĕрĕслеççĕ.

Унăн кружокĕнче вĕренекенсем занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ, активлăн тухса калаçаççĕ. Нойаберĕн 30-мĕшĕнче Тимофеев йулташ Чкалов, Андреева, Краснов йулташсен биографийĕсемпе тепĕр хут паллаштарчĕ. Унта нумайăн тухса калаçрĕç. 77 çулхи колхозницă Степанова Йевдокийа çапла каларĕ:

— Епĕ 77 çула çитрĕм ĕнтĕ, манăн хăлхасем те илтми пулчĕç. Патша саманинче епĕ ырлăх, ирĕклĕх, савăнăç, пĕртан правалăх курасса та сунман, ун çинчен тата хута вĕренесси çинчен епĕр, хĕрарăмсем, шухăшлама та пултарайман. Епĕр кăмака турчкисĕр пуçне урăх нимĕн те пĕлмен. Епĕ телейлĕ, епĕ халь ватă мар, хама çамрăк шутлатăп,—терĕ Степанова Йевдокийа.

79 çулхи колхозник Иван Федорович Федоров çапла каларĕ:

— Ĕлĕк епĕр çынсем пĕлĕт çинче вĕçни çинчен йумах халап калаттăмăр. Тĕлĕнетĕп, халĕ хамăр ывăл-хĕрсем пĕлĕт çинче вĕçеççĕ ĕнтĕ. Акă пирĕн Чкалов йулташ çурçĕр пăрĕсем урлă Америкăна çити 63 сехет таран пĕр анса лармасăр вĕçрĕ, ун чухлĕ вĕçен кайăк та вĕçеймест. Сталинла Конституципе суйлав Положенине епĕ лайăх ăнлантăм. Спасибă Сталин йулташа, пирĕншĕн, ватăсемшĕн тăрăшнăшăн. Спасибă ăна пире телейлĕ пурнăç панăшăн. Епĕ хамăн сасса Чкалов, Андреева, Краснов йулташсемшĕн паратăп, сире те вĕсемшĕн сасăлама чĕнетĕп,—терĕ вăл хăйĕн самахĕнче.

„Ударник" колхоз членĕсем пурте çак сăмахах калаççĕ: „Пирĕн кашнийĕнех пĕр ĕмĕт—вăл хамăр сасăсене Чкаловшăн, Андреевăшăн, Красновшăн парасси. Епĕр декабĕрĕн 12-мĕшĕнче уйав тумĕсем тумланса, пурте пĕр пек тăрса, пĕр сасăлăн, телейлĕ те хаваслă пурнăçăн йуррисемпе суйлава кайатпăр" теççĕ вĕсем. Тимофеев агитатора, пур вăйне хурса ĕçленĕшĕн, пысăк тав тăваççĕ.

Ник. Нехвет.

Кун пек хатĕрленмеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.) Суйлавçăсем хушшинче ĕçлĕсси, халь хи вăхăтра тĕп задачă пулса тăмала. Анчах 2-мĕш суйлав участкинче пачах урăхла. Доверенный Радайкин йул. ку таранччен те суйлавçăсем пурнакан вырăнсенче пулман, вĕсем хушшинче ĕçлемест. Участкăри суйлав комиççи ĕçлесе ларакан вырăна та пырса курман. Çавăнпа та ăна суйлавçăсем паллаmаççĕ.

2-мĕш суйлав участкин центрĕ Куйбышев йулташ йачĕпе тăракан шкулта. Тул йенчен пăхсан та, шалтан та участкăна йĕркене кӳртмен. Вывескă çук, плакатсемпе лозунгсем те çапман. Суйлавçăсен спискисене стена çине çыпăçтарнă. Ытла çӳле çыпăçтарнă пирки вулама хĕн. Çитменне тата хула совечĕ спискăсенче çав тери пысăк йăнăшсем туса пĕтернĕ. Миçе çултине, хушаматпа йата нумайĕшинне улăштарса пĕтернĕ.

Суйлав комиççийĕ суйлавçăсене тивĕçлипе кĕтсе илмест. Час-часах участкăна пыракансем ответ илмесĕрех тухса кайаççĕ, суйлав комиççи членĕсем участкăра пулмаççĕ. Йе тата хăшĕсем спискăра тĕрĕс маррине тупсан, çавăнтах хăйсем алăпа хуратса тӳрлетсе лартаççĕ (Токсубайев, Троицкий т. ыт. те.)

Суйлав комиççи пӳлĕмне те йĕркене кĕртмен. Стена çинче пĕр икĕ портрет, тепĕр схемăсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Сталинла Конституципе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положени" çинчен калакан брошӳрăсем çук. Хаçатсене те памаççĕ, суйлав комиççи секретарĕ хăй укçипе илет. Суйлав пӳлĕмĕсене йĕркелеме тытăнман-ха.

Иккĕмĕш суйлав участкинчи ĕçсем начар тăни пĕтĕмпех комиççи председателĕ Сухарев ĕçлеменнинчен килет.

Х. Лисин

Агитаци ĕçĕ начар пырать

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствин участкисенче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренес тĕлĕшпе 22 кружок ĕçлеççĕ. Анчах та хăшпĕр участкăсенче вĕренӳ йĕркелĕн пулса пымасть-ха. 1-мĕш участкăра Астраханцев агитатор нойабĕр уйăхĕнче пĕр занятие те иртермен. Родионов агитатор та 20 çынпа 2 занятие çеç туса иртернĕ. Тепĕр çитменлĕх вăл—рабочисене пурне те вĕренĕве йавăçтарманни пулать. 8-мĕш участкăра 4 кружок ĕçлет. Унта ĕçлекен 280 рабочирен 67 рабочийе кăна вĕренĕве йавăçтарнă. Кашни кружок виçшер занятие çеç туса иртернĕ.

2-мĕш участкăри 400 рабочи хушшинче пĕр занятие те туса иртермен. Постройком рабочисене вĕрентме агитатор та уйăрса паман. 3-мĕш участкăра пĕр кружок та организациленмен. Управленинче те 80 çынран 36 çынпа 2 занятие çеç туса иртернĕ.

Халĕ кружоксенче хĕрсех Аслă Совета тата Национальнăçсен Советне баллотировкăна тăнă кандидатсем çинчен агитацилемеле. Анчах ку ĕçе чукунçул çинчи рабочисене каласа ăнлантарма пуçанман та, хăшпĕр участкăсенче „Чăваш Коммунĕ", „Красная Чувашия" хаçатсем çук. Хаçатсем çырăнса пама рабочисем постройкомран темиçе хут та ыйтнă, анчах çырăнса паман.

Йаргуньин.

Çырусем урлă саламлаççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. („Чăваш Коммунĕ" корр.). Аслă Советăн Национальнăçсен Советне депутата суйлама Патăрйел Суйлав Округ Комиççийĕ регистрациленĕ кандидат, районри ĕçхалăхĕн йуратнă учительници—Ольга Тихоновна Харитонова йулташăн хăй вĕрентсе çитĕнтерне ученикĕсем тата унпа пĕрле ĕçленĕ учителсем пирĕн аннă çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенче пурăнаççĕ. Харитонова й. ученикĕсем ăна тав тăваççĕ, халăх ун çине çав тери пысăк шанăç хунипе савăнса саламлă çырусем çыраççĕ. Кунта епĕр красноармейцăсем йанă икĕ çырувăн сыпăкĕсене илсе кăтартатпăр. Вишнев В. В., учител, комсомолец, халĕ №-лĕ шкулта вĕренекен курсант-льотчик;

Сергейев П. С. комсомолец, учител, халĕ Хĕрлĕ çарта, курсант-льотчик.

„Сывă-и, Ольга Тихоновна.

...Суйлав кампанийĕ пуçлансанах, епĕ, Аслă Совета депутата суйлама пирĕн орденлă Чăваш республикĕнчен камсене кандидата сĕннине пысăк хаваслăхпа хаçатсем урлă асăрхаса пытăм. Епĕ, Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен хаçатсем урлă сăнаса пынă чух чăваш халăхĕн аванран та аван ывăл-хĕрĕсен, Ленин—Сталин парти ĕçне вĕçĕмсĕр парăннă çынсен йачĕсене тĕл пултăм. Пирĕн Патăрйел суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйлама Сире—Ольга Тихоновна, регистрациленине пĕлсен, епĕ çав тери савăнтăм. Епĕ мĕнле савăннине каласа пама сăмах та тупаймастăп.

Есĕр социалисăмла культурăна йала кĕртсе пыраканĕ пулса тăратăр. Нумай çулсем хушши педагогикă ĕçĕнче пулса, есĕр пирĕн районри кайа йулнă сахал мар йалсен сăнсăпачĕсене тĕпренех улăштартăр. Сирĕн ĕçсем кайра пыракан работниксемшĕн йаланах пример тата образец пулса тăчĕç. Епĕ, учител пулнăскер, сиртен нумай вĕренсе пытăм, сирĕн метăдсемпе ĕçлесе пырса чи аван результатсем куртăм.

Епĕ те суйлавçă, анчах ытла та шел, суйлав кунĕнче есĕр баллотировкăна тăнă округра пулаймастăп.

Епĕ, есĕр пирĕн йуратнă тăван çĕршывăн Аслă Советăн депутачĕ пуласса, суйлавçăсен шанăçне вырăна кĕртессишĕн хăвăрăн вăйхала шеллемесĕр ĕçлесе пырассине шансах тăратăп.

Халĕ урнă тăшман йулашки вăйне хурса хĕçпăшалланнă вăхăтра, фашиссем пирĕн границăсен хĕррипче сулланса çӳренĕ вăхăтра, епĕр сирĕнпеле, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа ывăтас ĕçе тата тимлĕрех туса пыма хатĕр.

Кирлĕ вăхăтра, партипе правителствă пĕрре чĕнсенех, сывлăша вĕçсе хăпарса, пĕр чарăнса тăмасăр тăшмана салатса тăкма хатĕр. Кирлĕ пулсан, тăван çĕршывăн телейĕшĕн хамăрăн çамрăклăха пама та йаланах хатĕр епĕ.

Комсомолла салампа—
В. Вишнев."

„Правда" хаçат урлă, Национальнăçсен Советне депутата суйлама сирĕн кандидатурăна Патăрйел Суйлав Округĕнче регистрациленине пĕлсен, питех те хĕпĕртерĕм. Сире, чухăн чăваш хĕрĕ пулнăскере, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕскерне Аслă Социалисăмлă государствăпа йертсе пыма шанăç хунăшăн епĕ хавасланатăп, çав хушăрах мухтанатăп та. Çак шанăç вăл—есĕр халăхшăн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр вăй хурса ĕçленине кăтартса парать.

Аван астăватăп, културăлă революцин малтанхи кунĕсенчех есĕр йалта тăрăшса ĕçленине, партипе комсомол йачейкисем организациленине, йалхуçалăхне коллективлас, кулаксене тĕп тăвас, колхозсене çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе есĕр вăй хурса ĕçленине те епĕ лайăх астăватăп. Клас тăшманĕсем сирĕн ĕçе чăрмантарма тăнине тата вĕсем тарăхса сирĕн кил-çурта вут тĕртсе çунтарса йанине те епĕ аван пĕлетĕп. Уйрăмăнах, сирĕн ĕç çамрăк ăрăва коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе ытла та хаклă. Есĕр шкулшăн, ачасемшĕн чунтан çунатăр.

Сире аван пĕлетĕп, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче килте пулнă май, епĕ хамăн сасса сирĕншĕн паратăп.

Салампа—П. Сергейев."

* *
*

Ку çырусем çумне урăх хушса калама та кирлĕ мар. Вĕсем, О. Т. Харитонова йулташ Аслă Совета суйлама тивĕçлĕ кандидат пулса тăнине аванах кăтартса параççĕ.

Н. Пушкин.

Конституци кунне хаваслăн иртерчĕç

Сталинла Конституцине йышăннă уйава Сĕнтĕрвăрринчи ĕçхалăхĕ пысăк çĕкленӳпе хаваслăнса уйавларĕ.

Декабĕрĕн 4-мĕшĕнче Судоверфри, спиртзаводĕнче, деткомиççин катка-пичке заводĕнче, Сĕнтĕрвăрри атă-пушмак çĕлекен ертелпе ытти ертелсенче, учреждениесенче, предприйатисенче савăнçлă вечĕрсем пулса иртрĕç.

Пухусемпе вечĕрсенче Сталинла Конституципе Аслă Совет суйлавĕ çинчен тата Аслă Совета суйламалли депутатсем çинчен ăнлантарчĕç. Ăнлантару хыççăн рабочисем пурте:

— Епĕр халь пурте стахановла рекордшăн сталинла вунăкунлăха хутшăнтăмăр. Çак вункунлăхра хамăр предприйатисемпе ертелсенче социалисăмла ăмăртса стахановла ĕçлессине вăйлатса çулталăк планне декабĕрĕн 12 мĕшне 100 процентчĕпех тултаратпăр.

Ĕçре простойсем тумасăр, малта пыракан стахановецсенчен пример илсе, кулленхи вормăна 200 процентран кайа мар тултарассишĕн ĕçлетпĕр. Аслă Совета суйламалли куна пурте пĕр çын пек пулса суйлав çуртсене кайса Аслă Совета депутат пулма тăратнă кандидатсемшĕн—З. А. Андреева, В. П. Чкалов, М. М. Сахьянова йулташсемшĕн хамăр сасăмăрсене паратпăр. Вĕсене Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ. Вĕсем Ленин—Сталин партийĕшĕн, пĕтĕм ĕçхалăхшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем,—терĕç.

Çавăн пекех декабĕрĕн 4-мĕшĕнче çĕр тĕркелӳ техникумĕнче, вăрман техникумĕнче, йавăç каскалама вĕрентекен техникумра, хулари вăтам шкулта Сталинла Конституцине йышăннин уйавĕ йачĕпе чаплă вечĕрсем пулса иртрĕç.

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче хула театрĕнче Сĕнтĕрвăрри ĕçхалăхĕн суйлав умĕнхи аслă пухувĕ пулчĕ. Пухура 550 çын ытла пулнă. Унта ССР Сойузĕн 20 çул хушшинчи çитĕнӳсем çинчен, Сталинла Конституци çинчен, Аслă Совета суйласси çинчен доклад пулчĕ.

Аслă Совета депутат пулма палăртнă кандидатсем Чкалов, Андреева, Сахьянова йулташсем çинчен райком секретарĕ Степанов доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн Аслă Совет суйлавĕ çинчен тата „Ночной извозчик" йатлă кинокартинăсем кăтартрĕç. В. Васильев.

Ку—пĕчĕк ĕç мар

ПАТĂРЙЕЛ, („Чăваш Коммунĕ" корр.). Аслă Совета суйламалли чи ответлă тапхăра кĕнине Патăрйелĕнче пурте ăнланса илмен-ха. Хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ халĕ, кăнтăрла кăна мар—каçхине те ĕçлемелле. Анчах кунти електростанци Патăрйел ĕççыннисенчен кулĕретех тăрăхлать: пĕр каç çутă парать, хĕрсе ĕçленĕ вăхăтра сӳнтерет те, вара тепĕр виçĕ каç пачах та çутă памасть.

Йалпо тата суту-илӳ организацийĕсем електростанци çине шанипе крaçин кӳрсе килмеççĕ.

Çак çитменлĕх суйлава хатĕрленес ĕçре пысăк инкек тума пултарать, çавăнпа та райĕçтăвкомăн ку çитменлĕхе пĕтермеле.

Н. П.

Чыслă ĕçĕн итогĕ

Паймитри Йу. М. Каганович йачĕпе тăракан колхоз (Куславкка р.) кăçалхи çул вăтам шутла кашни гектартан 120—130 пăт тĕш тырă туса илчĕ. Пĕр ĕçкунне 20 шер кĕренке тырă тивет. Й. Чернов, И. Романов колхозниксем 500—550 шер пăт илеççĕ. Колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Халĕ ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене тырă тата пахча-çимĕçсене валеçме тытăнаççĕ.

М. Йершов.

Решенисене пурнăçламаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Политçут учрежденинче ĕçлекенсен сойузĕн çентабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ районти пухувĕ, райкомитет ĕçне „питĕ начар" тесе хакласа, çĕнĕ состава ĕççене лайăхлатма кăтартусем парса хăварнăччĕ. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах ĕç куранмасть. Çентабĕр уйăхренпе профсойуз членĕсемпе пĕр пуху та туса иртермен, пĕр çынна та çĕнĕрен члена илмен. Уйрăмăнах ку ĕç йалти вулав çуртĕнче ĕçлекенсем хушшинче начар пырать. 29 çынна профсойуз членне йавăçтарман. Районти политçут учрежденисенче ĕçлекенсен сойузкомитечĕ работниксем хушшинче ĕçлемест. Профсойуз членне кĕме панă 5 ыйтува икĕ ерне хушши пăхса тухмасăр выртараççĕ.

Комитет хуçалăхне те йапăхтарнă. Ĕççем пурте райкомитет председателĕ В. Шабашев хветерĕнче выртаççĕ. Ĕç планĕ çук. Канмали çурта каймалли пĕр путовкăпа усă курман.

Профсойуз комитечĕ массăлă ĕçе те çителĕклĕ сарса йаман. Аслă Совета суйлама хатĕрленес ыйтупа нимĕн те туман. Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче ĕçлессине пачах манни.

Çапла „пурнăçлаççĕ" йышăннă решенисене профсойуз комитетĕнче ĕçлекенсем.

Займ укçисене тӳлесе татаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Кашни колхозрах ПСК(б) Парти Обкомĕн IV-мĕш Пленумĕн рашенисене сӳтсе йаваççĕ. Пленум решенисене колхозниксем ырлаççĕ. Халĕ чылай йалсоветсемпе колхозсем оборонăна тĕреклетмелли займ укçисене тӳлесе татма пуçларĕç. „Бойевик", „Трудовик", „Комсомолец", „Атăл", „Çĕнĕ йăла" т. ыт. колхозсем те декабĕрĕн 1-мĕшне займ укçисене тӳлесе татрĕç. Халĕ укçа тенкĕ пухас ĕçре пысăк çитĕнӳсем пулма пуçларĕç. В. Васильев.

Суйлав участкинче.

(Союзфото).

Стахановла рекордсен сталинла декади

Декабӗрӗн пӗррӗмӗшӗнче пуҫланнӑ стахановла рекордсен сталинла декади социалисӑмла ӑмӑртун ҫӗнӗ ҫекленӳ паллипе иртет.

Мускаври станоксем тӑвакан „Красный пролетарий" заводӑн стахановец-фрезеровщикӗсем, орденоносец Гудов йулташӑн ӗҫ опычӗпе усӑ курса, сталинла декадӑн иккӗмӗш кунӗнче чаплӑ рекордсем тунӑ. Нестеров йулташ плана 3.314 процент, Царев йулташ—2.578 процент тултарнӑ.

Украинӑри Коминтерн йачӗпе тӑракан заводӑн мухтавлӑ хурҫӑ шӑратаканӗ Йаков Чайковски декабӗрӗн 2-мӗшӗнче сменӑра 122,6 тоннӑ хурҫӑ шӑратса 1,5 нормӑ панӑ. Пӗр тӑваткӑл метр кӑмака тӗпӗнчен 8,4 тоннӑ хурҫӑ шӑратса кӑларас вырӑнне, вӑл 10,62 тоннӑ шӑратса кӑларнӑ.

Украинӑри Орджоникидзе йачӗпе тӑракан запорожсталь комбинатӗнчи мартен кӑмаки патӗнче ӗҫлекенсем декадӑн иккӗмӗш талӑкӗнче пӗтӗм кӑмакасен техникӑлӑ пултарулӑхӗнчен иртерсе 2.617 тонн хурҫӑ шӑратса кӑларнӑ.

Карагандӑри кӑмрӑк басейни декабӗрӗн 2-мӗшӗнче 13.529 тоннӑ кӑмрӑк панӑ. Кӑҫал ку басейнра ҫакӑн чухлӗ нумай кӑмрӑк кӑларни урӑх пулман.

Донецк чукунҫул ҫинчи Славйанск деповӗн коллективӗ производствӑ заданисене чаплӑн тултарнӑ. Ку депора начальник пулса ҫӗршывӑн мухтавлӑ чукунҫул рабочийӗ, Национальноҫсен Советне депутата суйламали кандидат Петр Федорович Кривонос ӗҫлет. Ӗҫе культурӑллӑ тата цит аван организациленипе паровозсене пойӑссем вӑльли пӗр татти-сыпписӗр пама май панӑ. Техникӑллӑ хӑвартлӑхӑн нормине депон пур локомотивӗсем те тултараҫҫӗ. Славйанскри кривоносецсем пуҫарнипе паровозсен сталинла колоннине организациленӗ.

(ТАСС).

Совет Сойузӗ ҫӗрмамӑкӗпе сахӑр кӑшманӗн тухӑҫӗ тӗлӗшпе пӗтӗм тӗнчипе рекорд тунӑ

Йалхуҫалӑхӗнчи стахановецсем кӑҫалхи ҫул техникӑлӑ культурӑсен пысӑк тухӑҫӗшӗн кӗрешсе тӗлӗнмеле ҫитӗнӳсем турӗҫ.

Сахӑр кӑшманӗн тухӑҫӗ тӗлӗшпе пӗтӗм тӗнчипе рекорд тунӑ. Йутҫӗршывсенче ҫак культурӑн чи пысӑк тухӑҫне 1929 ҫулта Калифорнире илнӗ. Унти пӗр фермер 22 гектар ҫинчен гектартан 948 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илнӗ.

Совет ҫӗршывӗнчи стахановецсем ҫавӑнтан таҫта ҫитех мала иртсе кайнӑ. „12 лет октября" колхозри звенийевайа Е. Сидорук (Винница облаҫӗнчи Тростйанецк районӗ), „III Интернационал" колхозри звенийевайа Оторбайева (Киргиз ССР, Карабалтинск районӗ) пӗлтӗрхи ҫулах гектартан 1.170—1.196 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илнӗччӗ. Кӑҫалхи ҫул Оторбайева звени гектартан 1 800 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илнӗ. Гектартан 1.000 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илнӗ стахановецсем—колхозсенчи бригадирсем тата звенийевойсем вуншарӑн шутланаҫҫӗ.

Колхозсенчи стахановецсем ҫӗрмамӑкӗн тухӑҫӗ тӗлӗшпе тата чаплӑрах ҫитӗнӳсем тунӑ. 1934 ҫулччен ҫӗрмамӑкӗн тухӑҫӗ тӗлӗшпе те пӗтӗм тӗнчери рекорд тӑвакансем Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенче пулнӑ. Гектартан 47 центнер ҫӗрмамӑкӗ туса илни пӗтӗм тӗнчери рекорд шутланнӑ. Совет ҫӗршывӗнчи ҫӗрмамӑкӗ тӑвакансем ҫав рекордран таҫтах мала иртсе кайнӑ.

Ҫӗрмамӑкӗн тухӑҫӗ тӗлӗшпе малти вырӑнта Узбек СС Республикӗнчи ҫӗрмамӑкӗ тӑвакансем пыраҫҫӗ. Намаган районӗнчи „Идҗтимойат" колхозри орденоносец Ибрагим Рахматов пӗлтӗрхи ҫул пӗтӗм ҫӗрӗ ҫинче гектартан 115 центнер ҫӗрмамӑкӗ туса илнӗ. Ҫӗрмамӑкӗ тӗлӗшпе пӗтӗм тӗнчери рекорда „Авангард" йалхуҫалӑх артелӗ тунӑ. Ҫав колхозра Касимов бригади вӑтам шутпа гектартан 117 центнер, Казахбайев звени—122 центнер ҫӗрмамӑкӗ туса илнӗ. Кӑҫалхи ҫул ҫӗрмамӑкӗ тӑвакан вуншар маҫтӑрсем гектартан 100 центнер туса илеҫҫӗ. Сталин йачӗпе тӑракан колхозри Адрахим Бабарахимов звени (Узбекистан, Избаскент районӗ) гектартан 136 центнершер ҫӗрмамӑкӗ пуҫтарса илнӗ те ӗнтӗ. Звено халӗ те ҫӗрмамӑкӗ пуҫтарас тӗлӗшпе ӗҫлет.

(ТАСС).

Буровина станочницӑн рекорчӗ

ҪӖМӖРЛЕ (Чӑваш Коммунӗ" корр). Комбинатри стахановкӑ Наталийа Буровина нойабӗрӗн 27-мӗшӗнче нихҫан туман ҫӗнӗ рекорд турӗ. Вӑл ҫак кун сӗтел урисене шӑтарнӑ, шкафӑн стажкисемпе бланкисене тунӑ ҫӗрте ӗҫлесе пӗр кунхи нормӑна 349 процент тултарнӑ.

Буровина йулташ ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали куна тӑтах та ҫӗнӗ ҫитӗнӳ тунипе кӗтсе илме пулать. Вӑл нойабӗрӗн 28-мӗшӗнче те нормӑна 300 процент ытла тултарнӑ.

Госбанк ҫурчӗ

Государствӑ банкӗн Шупашкарти кантурӗ нойабӗрӗн 30-мӗшӗнче Карл Маркс урамӗнчи йатарласа тунӑ виҫӗ хутлӑ чулҫурта куҫрӗ.

Ҫӗнӗ ҫурт ҫав тери лайӑх. Пӳлӗмӗсем пысӑк та ҫутӑ. Ҫӗнӗ сӗтел-пукансем илсе лартнӑ, урайне ҫӗнӗ ковйорсем сарнӑ.

Чи ҫӳлти хутӗнчи коридорта банка пыракан ҫынсем валли пукансем, сӗтелсем лартнӑ. Пӗр пысӑк пӳлӗмӗнче хӗрлӗ кӗтес организациленӗ. Айалти хутӗнче столовай пулать.

Ҫак ҫуртпа йунашарах кунта ӗҫлекенсен пурӑнмали корпус-хватер тунӑ.

Государствӑ банкӗн кив ҫуртне Шупашкар хула совечӗ йышӑннӑ.

Радио лартрӗҫ

ЕЛӖК. Ҫӗмӗрткассинчи Киров йачӗпе тӑракан колхозра радио лартрӗҫ. Колхозниксем халӗ пӗрле пухӑнса радио итлеҫҫӗ.

Колхозри строителствӑ

ВАРМАР. Кӗтеснерти „Партин 15-мӗш сйесӗ" колхоз строителствӑ ӗҫне вӑйлатсах пырать. Кӑҫал утар валльи пылхурчӗсене кӳртсе лартма омшаник турӗ. Халь акӑ 40 лаша вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите туса пӗтерчӗҫ.

П. Мефодийев.

Испани хӗрарӑмӗсемпе ачисене пулӑшаҫҫӗ

Шупашкарти Чӑвашторгра ӗҫлекенсенчен 92 процент МОПР йачейкинче тӑраҫҫӗ. МОПР членӗсем хушшинче йутпатшалӑхри лару-тӑру тата МОПР задачисем ҫинчен час-часах докладсем пулаҫҫӗ. Испанинчи ӗҫхӗрарӑмӗсемпе ачасене пулӑшма служащисем хӑйсен ӗҫукҫинчен 0,5 процент параҫҫӗ. Йачейкӑ членӗсем шеф укҫисене те, член укҫине те вӑхӑтра тӳлесе пыраҫҫӗ.

Ф. Тимофейев.

Испани халӑх фрончӗн комитечӗн манифесчӗ

Испани халӑх фрончӗн нацилӗ комитечӗ ҫакӑн пек манифест кӑларнӑ:

„Халӑх аслӑлӑхне тӗрӗслемели сӗнавлӑ испытани сехечӗсем ҫитсе килесҫӗ. Захватчиксем чаплӑ ҫар хатӗрӗсемпе хӗҫпӑшалланнӑ хӑйсен пӗтӗм ҫарӗсене пӗр ҫӗре пуҫтарнӑ. Епӗр захватчиксем ҫӗнӗрен тапӑнасси мухтанмасӑр, ҫавӑн пекех шиклекмесӗр лӑпкӑн кӗтетпӗр, епӗр хамӑр ҫарӑн ҫирӗп дисциплини, вӑйӗ, пуҫарулӑхӗ тата унӑн материалӗ тата ҫар ҫыннисен пысӑк ресурсисем ҫине, никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассине ҫирӗппӗн сыхлакан, хӑйӗн ҫарӗн ҫирӗплӗхне тата политикӑллӑ пӑхӑнманлӑха тепӗр хут йӗркелес шухӑшпа хавхаланнӑ пирӗн халӑх фашисӑма хирӗҫ вӑйлӑн тӑрас ҫине ҫирӗп шанатпӑр.

Халӑх фрончӗн нацилӗ комитечӗ хӑй правительствин пуҫлӑхӗн сӑмахӗсемпе пӗр шухӑшлине кӑтартать, вӑл ҫапла калать: вӑрҫӑ пӗр пӑрканлансӑр тата пӗр уступкӑсӑр, ҫӗнтериччен тӑсӑлать.

Ҫӗнтерес пулсан, пӗтӗм фашисӑма хирӗҫлисен, пӗтӗм Испани ҫыннисен пӗрле пулмала, вӗсен захватчиксене хирӗҫ тухмала.

Пӗтӗм тӗнчери демократсем, ӗҫҫыннисем, фашисӑма хирӗҫле партисем тата организацисем! Германипе Итали фашисӑмӗ Испанире тӑвакан ирсӗр ӗҫсем пире фашисӑмпа кӗрешес ӗҫре пур майпа та пулӑшма ыйтма хушаҫҫӗ. Пайан пирӗн ҫӗршыв—Германипе Итали фашисӑмӗн агрессийӗн мӑшкӑлӗ, Китай—Йапони империалисӑмӗ ассӑнакан вырӑн.

Икӗ халӑх та хӑйсен никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тата ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫаҫҫӗ. Ҫапах та, пирӗн ирӗклӗх тата никама пӑхӑнманлӑх тӗнчери халӑхсен пурнӑҫӗпе ҫыхӑннине сирӗн йаланах астумала".

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ.
Ӳкерчӗк ҫинче: Китай салтакӗ гранатӑпа (Шанхай фрончӗ).
(Союзфото).

Германире ҫынсем хӑйсене хӑйсем вӗлереҫҫӗ

Фашисла Германире ҫынсем хӑйсене хӑйсем вӗлересси кунран кунах нумайланса пырать. Йулашки 2—3 кун хушшинче пӗр Берлин хулинчех, пурнӑҫ чухӑннипе пуҫа нисҫта кайса чикме ҫуккипе, хӑйсене хӑйсем вӗлернисене нумай регистрациленӗ.

Шелӗберг районӗнче Берлин ватӑ ҫынсем—упӑшкипе арӑмӗ хӑйсене хӑйсем вӗлернӗ. Столицӑн ҫурҫӗр районӗнче 25 ҫулхи ҫамрӑк хӗрарӑм пойӑс айне сиксе вилнӗ. Ҫав районрах, рабочисем ытларах пурнакан районра, 35 ҫулхи хӗрарӑм хӑйӗн 5 ҫулхи хӗрачипе пӗрле газпа пӑчӑхса вилнӗ. 32 ҫулхи рабочи урамра автомобил айне вyртса вилнӗ. 38 ҫулхи хӗрарӑм Берлинри выставкӑ плошчӗдӗнчи радиобашньӑ вышки ҫинчен сиксе вилнӗ. Реклингаузен хулинче 37 ҫулхи хӗрарӑм хӑйӗн 7 ҫулхи ывӑл ачипе пӗрле пойӑс айне выртса вилнӗ.

(ТАСС).

Франциpи фашисла заговор пирки ӗҫе тӗпчени

Парижрен пӗлтернӗ тӑрӑх, следстви влаҫӗсем нумай пулмасть тупса палӑртнӑ фашисла заговорпа ҫыхӑннӑ ухтарусене тата допроссене ҫаплах тӑваҫҫӗ. Пур ҫӗрте те пекех нумай хӗҫпӑшалсем тупнӑ. Заговор тӑвакансем вӑл хӗҫпӑшалсене „тупнӑ йапаласем" тесе ухтарупа пулакан хӑрушлӑхран „хӑтӑмла" шутлаҫҫӗ.

Фонтенебло хули тӑврашӗнче ухтарусем тунӑ вӑхӑтра, вырӑнти вӑрман хуралҫи пӳртӗнче пиротехнически лаборатори—гранатсем тумали тӗрлӗ хатӗрсем тултарнӑ ултӑ йещчӗк тупнӑ. Чылай хуласенче гранатсем нумай тупнӑ.

Франци общественнӑҫӗ заговор организаторӗсене тата ӑна хавхалантаракансене ҫапса салатассине питӗ хытӑ кӗтет. Следствин заговор руководителӗсене ҫеҫ арӗслеме тесе шухӑшлакансем ҫук та.

Франци компартин „Юманите" хаҫачӗ фашисла заговор тӑвакансене пурне те арӗслеме хушать, Дорио, ренегат фашис Германин вӑрттӑн полиципе (Гестапопа) таччӑн ҫыхӑну тытнине уҫҫӑн та тӳррӗн кӑтартса парать.

(ТАСС)

Йапонцӑсем Англи пароходне пенӗ

ЛОНДОН, 4/XII (ТАСС). Рейтер агенстви пӗлтернӗ тӑрӑх, декабӗрӗн 4-мӗшӗнче йапонцӑсем, Чунмин утравӗ патӗнче (Йанцзы шывӗ тивесе кӗнӗ тӗлте), Англин „Суйщань" йатлӑ пысӑк мар пароходне пулеметсенчен пенӗ. Пароход хӑйӗн ҫулне улӑштарса, Шанхайа таврӑннӑ. Пулеметсенчен персе пароход ҫинчи пӗр матроса китайецӑ вӗлернӗ, тепӗр матроса амантнӑ.

Ҫав пароход ҫинчи пассажирсем хушшинче Англин Шанхайри консульствин секретарӗ, Чунмин утравӗ ҫине кайма тухнӑскер, пулнӑ.

Хуҫасӑрлӑх пур ҫӗрте

КАНАШ. Кашкӑрсырмӑри „Пӗррӗмӗш май" колхозра пуҫтарса кӗнӗ тырпула тирпейлеме шутламаҫҫӗ. Ҫапнӑ тырӑсене пуҫтарса хуман. Тасатнӑ сӗлӗ игем варринче купаланса выртать, унта кунӗн-ҫӗрӗн лаши, сурӑхӗ, сысни пурте пырса ҫийеҫҫӗ. Ҫапнӑ улӑмсем сапаланса выртаҫҫӗ. Унта кунта арпасем ҫӗреҫҫӗ.

Лаша витине йусаман. Витери урай хӑмисем ҫӗрсе пӗтнӗ. Фермӑри ӗнесене пӗр арпалӑхра усраҫҫӗ.

Йалхуҫалӑх машинӗсем те йур айӗнче лараҫҫӗ.

Ив. Радиков.

Аҫта мӗн сутмала?

ТРАК. Район центрӗнче кашни кӗҫнерникун пасар пулать. Пасара ҫу, чӑкӑт, ҫӑмарта тата ытти ҫимӗҫсене те сутма колхозниксем тухаҫҫӗ. Анчах та ҫимӗҫсемпе суту-илӳ тума вырӑн туса паман, ҫавӑнпа та сутмали таварсене алӑра тытса тӑраҫҫӗ. Ҫавнашкалах ытти таварсене те выльӑх-чӗрлӗх, тырӑ-пулӑ т. ыт. те аҫта кирлӗ унта сутаҫҫӗ. Районти шалти суту-илӳ ӗҫсен пайӗ ҫак йӗркесӗрлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те тумасть.

П. Йаковлев.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри тӑшмансем совет сучӗ умӗнче

Декабӗрӗн 3-мӗшӗнчи каҫхи ларуран пуҫласа декабӗрӗн 4-мӗшӗнче, 6-мӗшӗнче тата 7-мӗшӗнче суд свидетелсем кӑтартса панине итлерӗ.

Свидетелсем пурте айӑпланакансен—Спиридонов, Павлов, Шулов, Суриков, Михопаркин, Орлов, Зайков тата Семйагин сӑтӑрла ӗҫӗсене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пыраҫҫӗ.

Акӑ, свидетел А. Семенов—Вӑрнар ҫӗрӗҫ пайӗн аслӑ зоотехникӗ каланӑ тӑрӑх, Михопаркинпа Шулов айакран кӳрсе килнӗ такасене вӗсем чирлӗ пулсан та, емеллемесӗрех колхозсене салатма хушса телеграммӑ йанӑ.

— Вырӑнти выльӑхсене метизацилес ӗҫре нимӗнле йӗрке те пулман. Ҫав йӗркесӗрлӗхе татах та пысӑклатас шутпа Спиридонов Ҫӗрпӳри сӑнав станцинчи сыснасене пурне те, вӗсен пахалӑхне шута илмесӗрех ӑратлӑ кӗнеке ҫине кӗртме хушрӗ,—тет свидетелница Кузминскайа. „Племзаготконтора" та ҫак йӗнӗпе сӑтӑрла ӗҫленӗ. Ӑратлӑх свидетелствисене колхозсене салатса памасӑр тӑнисӗр пуҫне тата хӑшпӗр свидетелствисене хӑйсен аллисемпе тӳрлетсе майлаштарса панӑ. Искусственнӑй майпа пӗтӗлентермели пунктсене панӑ такасен номӗрӗсем те ӑратлӑх свидетелстви ҫинче кӑтартнӑ номӗрсемпе пӗр пек пулман.

Ҫавӑн пекех, айӑпланакансем выльӑх-чӗрлӗхсен сикекен чирсене сарас тӗлӗшпе сӑтӑрла ӗҫсем туса пынине те свидетелсем уҫҫӑнах кӑтартса параҫҫӗ. Свидетел Калинкин каланӑ тӑрӑх, ветеринари управленийӗн начальникӗ пулса ӗҫленӗ Михопаркин сикекен чирсемпе кӗрешес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлекен работниксене ӗҫрен кӑларакӑлара йанӑ. Районсенчи ветеринари работникӗсем чылайӗшӗ йӑла йенчен пӑсӑлса кайнӑ. Михопаркин йенчен ҫавӑн пек работниксемпе кӗрешни пӗртте пулман, мӗншӗн тесен ҫавӑн пек работниксемпе хӑйӗн сӑтӑрла ӗҫӗсене тума ҫӑмӑлрах тесе шутланӑ Михопаркин. Свидетелсем республикӑра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре сӑтӑрла ӗҫсем тӗпрен илсен ҫак йӗнӗҫе пулса пынине тӗплӗн кӑтартса пачӗҫ: сӑтӑрҫӑсем—Спиридонов, Шулов, Павлов, Михопаркин тата ыттисем выльӑх-чӗрлӗхсене вальли пирӗн апат-ҫимӗ ҫителӗксӗр тесе выльӑх-чӗрлӗх хисепне чакарма тӑрӑшнӑ. Кун ӑр пуҫне тата тӗрлӗ майсемпе сикекен чирсем сарса выльӑхсене вӗлерсе тата вӗсен продуктивлӑхне чакарса колхозсене пысӑк убыткӑ тума тӑрӑшнӑ. Вырӑнти выльӑхсене метизацилесе лайӑхлатас ӗҫе пӑтраштарса йарса, паха ӑратлӑ мар выльӑхсене айакран кӳрсе килсе салатса социалисӑмла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе пысӑк сийен кӳнӗ.

М. Костин.

КИНО, ТЕАТР

Мухтава тивӗҫлӗн выльарӗҫ

Турхан клубне халӑх лӑках тулнӑ. Хушӑран шур сухалӑ старриксем те курӑнкалаҫҫӗ. Ачисем тата... Клуб алӑкне шӑп картласа хунӑ, шала кӗресшӗн ҫухӑраҫҫӗ.

Кассӑ умӗнче тӳпелешсе билет илеҫҫӗ.

— Урӑх билет ҫук,—илтӗнчӗ кассир сасси.—Вырӑн ҫитмест.

Йулташ пулӑшнипе мана та арантан кӗме телей пулчӗ.

Малтан пйесӑ пуҫланиччен, пӗр актӧрӗ тухса Чкалов йулташ ҫинчен каласа ӑнлантарчӗ. Театр коллективӗ Аслӑ Совета суйламали саккун ҫинчен халӑх хушшинче ӑнлантарса пама 5 бригадӑна уйӑрӑлнӑ. Кантӑрла тата каҫхине те, постановкӑ пуҫланиччен, суйлакансене Аслӑ Совета суйласси ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ. Ҫакна вӗсем килӗрен ҫӳресе тата ытти майсемпе те тӑваҫҫӗ.

Часах сценӑ уҫӑлчӗ. Декораци аван, выльаканӗсем тата лайӑхрах. Пинерпине (Стахейева актриса выльарӗ) хӗрхенсе куҫҫуль кӑларакансем сахал мар пулчӗҫ, Фролов актӧр Айдар рольне аван выльарӗ. Вӑл тискер тӑшманӑн (Айдарӑн) образне витӗмлӗн туса кӑтартма пултарнипе, пӑхса ларакансен Айдара вӗлерес килсе тӑрать. Ахтупай рольне Соловйов актӧр лайӑх кӑларчӗ, касна-лартнӑ старик, пӑхса ларакансем Соловйовба выльанӑ ҫӗртех алӑ ҫупса тавтуни те пулчӗ. Мӑнкӗрӳ—Смирнов актӧр киремете авалхи ҫынсем пек пехилесе кӑтартрӗ, сассине лайӑх кӑларчӗ.

Пӗр-ик сӑмах пйесӑ ҫинчен. П. Н. Осипов йулташӑн „Айдар" пйеси халӑха питӗ килӗшет. Патӑрйелӗнчи колхоз театрӗ ӑна Турхан районӗнчи колхозсенче 20 хут лартса парать. Турхан йалӗнче виҫӗ хут лартрӗҫ пулин те, вырӑн ҫитменнипе кураймасӑр йулнисем пайтах пулчӗҫ.

Колхоз театрӗ музыкӑ йенчен те пит мала кайнӑ. Кунти Чернышев—Шетмӗ йура аҫтаҫи (ҫамрӑк ача) 25 массӑлӑ йурӑ ҫырнӑ. „Кремӗль", „Хӗвелӗмӗр Сталин"—хорпа йурламали йурӑсем (кӗввисем пичетре ҫапӑнман) пит илемлӗ. „Кӗтӳҫ шӑхличӗ" (тутар йурри), „Туркмен ташши" (Туркмен кӗвви") байан тата скрипкӑ ҫинче аван тухрӗҫ. Выльакансем—хӑй, Чернышев, тата Ерке, Дубов йулташсем пит пысӑк ӗмӗт параҫҫӗ.

Ҫапла вара, Патӑрйелӗнчи колхоз театрӗ колхозниксене ытти вак халӑхсен культурипе те паллаштарать.

Актӧрсем хӑйсен ӗҫне пит йуратса туни курӑнать, ӗҫе йуратнӑ пиркийех вӗсем хушшинче талантсем (Чернышев, Дубов) ҫураласҫӗ. Анчах вӗсене палӑртас, пулӑшас шутпа ӗҫлени сахал. Чернышев йулташ хӑй кӗвӗленӗ йурӑсене Шупашкарти музыкӑ аҫтаҫисем витӗр кӑларма шанмасть, мӗншӗн тесен, вӗсем ҫамрӑк аҫтаҫӑсене ҫул парасшӑнах мар, иккен. Чернышевӑн кӗввисем хасгарлӑ, ӑша ҫӗклекен кӗвӗсем. *Вӗсене кунҫул памала.*

Турхан халӑхӗ Патӑрйел театрне лайӑх хак пачӗ. Тивӗҫлӗ организацисем халӑх йуратакан театра ытларах пулӑшса пырасса шанас килет.

К. Пайраш.

„Аслӑ Совета депутата суйламали кандидатсем"

Хальхи вӑхӑхра Шупашкар хулинчи кино-театрта „Сойузкинохроникӑн" Чӑваш студийӗ йатарласа ӳкернӗ журнал кӑтартаҫҫӗ. Журнал—„ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйлама Чӑваш республикӗнчен тӑратнӑ кандидатсем" йатлӑ.

Кинофильмра епӗр хамӑрӑн тивӗҫлӗ кандидатсене—халӑх телейӗшӗн, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешекен ҫынсене, тӑван ҫӗршывӑн чаплӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсене куратпӑр. Акӑ екран ҫине Андрейева, Спасов, Коротков, Цыганова, Краснов, Новиков, Сахйанова, Моисейева, Харитонова, Иванов, ССР Сойузӗн Тӗпӗҫтӑвком секретарӗ Горкин т. ыт. йулташсем те тухаҫҫӗ.

Ку журнал урлӑ халӑх Аслӑ Совета депутата суйлама хӑй тӑратнӑ кандидатсемпе паллашать.

С. К.

Извещение

на заседании комиссии по приему и исключению из рядов комсомола при Чувашском ОК ВЛКСМ к 10-ти часам утра на 13 декабря 1937 г. в г. Чебоксары (улица Карла Маркса дом № 13) для участия в разборе поданных апелляций

ВЫЗЫВАЮТСЯ:

1. ФАДЕЕВ П. Ф.—г. Марпосад, райисполком
2. МАЙОРОВ А. Е.—г. Чебоксары
3. ЧЕЛЫШКИН Л. И.—дер. Хозанчино, Татар-Касинского района
4. ИЛЮХИН Д. И.—гор. Алатырь
5. СЕМЕРХАНОВ Г.—дер. Тат-Шуруты, Шихирдановского района
6. СУНГАТУЛИН А. М.—дер. Иш-Суринск, Шихирдановского района
7. БЕРДНИКОВ П. П.—гор. Чебоксары, Пединститут
8. ВОЛКОВ А И.—дер. Сидуково, Татар-Касинского района
9. ИВАНОВА Н. И.—Кушниковская начальная шк. Марпосадского района
10. КОНСТАНТИНОВ А. К.—дер. Хоруй, Урмарского района
11. ОРЛОВ А. Н.—гор. Чебоксары—ВКСХШ
12. ЩЕТИНИН В. И.—гор. Ядрин—электростанция
13. ПОЖЕДАНОВ П. А.—Большой Сундырь, Татар-Касинск. р-на
14. АРТЕМЬЕВ С. А.—дер. Средне-Татмыши, Канашского района
15. ЕРГУНОВ Д Ф.—с. Нижний-Чукалы, Шемуршин. р-на
16. КАЗАНКОВ И. С.—дер. Кюмель-Ямашево, Вурнарск. р-на
17. ОРЛОВ Н Ф.—дер. Ящерино, Марпосадского р-на
18. ИВАНОВ Л. И.—дер. Красномайск Батыревск. р-на
19. ЛЬВОВА В.—г. Чебоксары, Музучилище
20. ОРЛОВ А. И.—г. Чебоксары, Аэроклуб
21. ВАСИЛЬЕВ А. В.—гор. Чебоксары, Пединститут
22. ПЕТРОВ И. П.—Янтиково, РОНО
23. КРАСНОВ И П—дер. Кичнеево, Янтиковского р-на
24. РОМАНОВА М. Г.—гор. Чебоксары. Пединститут
25. ДУБИНКИН Н. И.—с. Сиява, Порецкого р-на
26. ИВАНОВ Г. И.—г. Цивильск, ДТС
27. МАЛОВ А. Г.—с. Альменево, Вурнарского р-на
28. КИРИЛЛОВ М. К.—дер. Катергино, Козловского р-на
29. ХАРИТОНОВ Я. Х.—г. Ядрин
30. СЫЧЕВА Т. П.—г. Ядрин

Райкомы комсомола должны выслать в Обком комсомола своих представителей и обеспечить обязательную явку вызываемых лиц к указанному сроку.

Путевые расходы Ообкомом оплачиваться не будут.

Комиссия по приему и исключению из рядов комсомола при Чуваш. ОК ВЛКСМ.

Хӗрлӗ шатра (хӗрлӗхен) чирӗпе чирленӗ ачана мӗнле пӑхмала

Ку чире вырӑсла „корь" теҫҫӗ. Пӗрре тапрансан вӑл, унпала чирлемен ачасене пурне те пекех чирлеттерет. Виҫӗ ҫул тултарман ҫамрӑк ачасем тата рахит пулнӑ ачасем ыттисенчен йӑвӑртарах чирлеҫҫӗ. Ку чирпе ачасем пӗр вӑхӑтрах йышлӑн чирлесе пынӑ пирки, вӗсене пурне те больницана хума майӗ те ҫук. Ҫавна пула, хӗрлӗхенпе чирленӗ ачана килтех пӑхса ирттерме тивет. Кун пек чух чирлӗ ачана йӗркелӗ пӑхма пӗлни темӗнле емелрен те хаклӑ. Хӑй тӗллӗн ҫеҫ иртсе пырсан ку чир йӑвӑр чир те темеле мар, анчах пӑхма пӗлмесен, хӗрлӗхенпе чирленӗ ачана часах ытти чирсем те лекме пултараҫҫӗ: йе вӑраха кайакан ӳслӗк, йе чахоткӑ лекет, йе хӑлха пӳрленсе йухакан пулма пултарать.

Хӗрлӗхен чирӗ ачана мӗнле чирлеттерет? Малтан сунас, ӳслӗк пуҫланать. Куҫӗсем хӗрелсе шывланакан пулаҫҫӗ. Ача пӑртак вӗриленет. Тепӗр виҫ-тӑватӑ кунран пӗтӗм ҫан-ҫурӑмне хӗрлӗ шатра тухать. Куҫӗсем ҫутта пӑхма канҫӗрленекен тата пӳрленекен пулаҫҫӗ, ӳслӗкӗ вайланать. Ҫак вӑхӑта чирлӗ ача йӑвӑр тӳссе иртерет. Ачана чипер йӗркелӗ пӑхса пырсан, тӑват-пилӗк кунсенчен вӗри чака пуҫлать, шатрисем те типсе, кӗрпекленсе ӳке пуҫлаҫҫӗ. Чирлӗ ача кунран кун сывалса пырать.

Хӗрлӗ шатрапа чирленӗ ачана пуринчен малтан таса сывлӑш кирлӗ. Урайсене, тусан вӗҫтерес мар тесе, нӳрӗ милӗкпе шӑлмала. Пӳлӗмре сывлӑш тасамар тӑрсан, ӳслӗк вӑрӑма кайать, тата ӳпке шыҫма (воспаление легких) пултарать, йе чахоткӑ пуҫланса кайать. Чирлӗ ача выртакан пӳртре тӗтӗм, шӑршӑ ан пултӑр. Пӳртри сывлӑша вӑхӑчӗ вӑхӑчӗпе йе кӑмака марйине йе форточкӑна уҫса уҫӑлтармала. Анчах ик ҫӗртен те уҫма йурамасть, сивӗ ҫапма пултарать.

Пӳрленекен куҫа вӗретнӗ ӑшӑ шывпа ҫуса таса мамӑкпа шӑлса пымала. Ҫутта пӑхма кансӗр пирки, ҫутӑран пӑртак хӳтӗлесе тытмала. Анчах чирлӗ ача выртакан вырӑна пачах карса лартмала мар, мӗншӗн тесен кун пек туни сывлӑша питех те йӑварлантарать.

Вӗрипе выртакан ачан ҫӑварӗшӗсем йӳҫӗхсе тасамарланаҫҫӗ. Ҫӑвар ӑшне тасатса тӑмасан, ҫӑварти тасамарлӑх хӑлхана кайса пӳрленекен тӑвать, ҫавӑн пекех тата йаҫах айӗсем шыҫӑнма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа чирлӗ ачан тути-ҫӑварне кунне темиҫе хутчен вӗренӗ ӑшӑ шывпа чӳхесе тасатмала.

Сунас вайлӑ пирки ачан сӑмсине те таса тутӑрпа йе мамӑкпа шӑлса тӑмала. Сӑмса шӑтӑкӗсем типесрен, вӗсене вазелинпа йе борнӑй вазелинпа сӗрмеле.

Чирлӗ ачана ҫӑмӑл, шӗвек апат-ҫимӗҫ парса пымала. Уйрӑмах шӗвек пӑтӑ, сӗт, чей шывӗпе йӗпетнӗ шурӑ сухари тата типӗтнӗ панулми, йе типӗтнӗ ҫырла шывӗсем парса пыни йурӑхлӑ. Тӗрлӗрен ерех-мӗн пани чирлӗ ачана пӗре те усӑлӑ мар, ерех тавраш сийен тума ҫеҫ пултарать.

Чирлӗ ачан кӗпе-тумтирӗсене ҫине-ҫинех улӑштарса пымала. Тасамарланнӑ кӗпе-тумтир вӑл сывлӑша йӑварлантарать, чирлӗ ачана кансӗрлентерет. Айне сарнӑ тӳшек-минтерсене, ҫивитти-утийалӗсене те вӑхӑ-ра шаккаса, ҫуса тасатса тӑмала.

Ӳслӗк ытлашши йӑвӑр мар пулсан, емел кирлӗ те мар. Анчах та чирлӗ ачана ӳслӗк ытах та аптӑратма пуҫласан, тухтӑртан емел илмеле. Чирлӗ ачана вӗри чаксан та тепӗр ернене йахӑн вырӑн ҫинче канлӗх парса тытмала, вара ача татах та ҫирӗппӗн сывалать.

Хӗрлӗхен чирӗ йересрен мӗнле сыхланмала? Виҫӗ ҫул тултарайман ачасем ку чирпе йӑвӑррӑн чирлеме пултарнӑ пирки, ун пек ачасене хӗрлӗ шатрапа чирленӗ кӳршӗсене илсе тухас пулмасть. Ҫамрӑк ачасене ку вӑхӑтра ҫав чирпе чирлесрен укол тӑваҫҫӗ.

Хӗрлӗхен чирӗ 4—5 уйӑхри чӗчӗ ачисене сахал чирлеттерет. Нумайӗшӗ вӗсенчен чирлемеҫҫӗ те.

Чир хыҫӗнчен уйрӑм дезинфекци мӗн тумаҫҫӗ. Пӳртри сывлӑша пӗр вӑхӑта лайӑхрах уҫӑлтарни те ҫителӗклӗ.

Врач Й. Макаров.

„Чӑваш Коммунӗ" ҫырӑнса илмели хаксем; 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха—2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Ответлӑ редактӑр заместителӗ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Уполномоченный Чувашглавлита № 933. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.